141 Турăпа мирлешес текенсене шыратпăр

(Лука 10:6)

1. «Ыр хыпар сарăр»,— хушнă Иисус.
Вăл шăрăхра нумай утса
Пĕлтернĕ ырă хыпара.
Вăл çынсене юратнă чĕререн,
Ир пуçласа каçченех
Вĕрентнĕ вĕсене.
Килтен киле, урамсенче
Хĕн-хур кĕçех пĕтет тесе
Эпир калатпăр пĕтĕм çĕр çийĕпе.

(ХУШСА ЮРЛАМАЛЛИ)

Кам чăн Турра
Пĕлсе ăна çеç пуççапасшăн,
Кам чăнлăха
Тупса телейлĕ пурăнасшăн,
Айтăр шырар
Çав çынсене.

2. Вăхăт сахал вĕт, вăл кĕтмест пире.
Мĕн чухлĕ çын, мĕн чул чĕре!
Çăласчĕ вĕсенчен пĕрне.
Хавхалантартăр юрату пире.
Шăлса илет кĕçех Турă
Пĕтĕм куççуле.
Эпир шыратпăр çынсене,
Пире итлес текенсене.
Туса тăратпăр хаваспах çак ĕçе.

(Хушса юрламалли)

 (Çавăн пекех Исаия 52:7; Матф. 28:19, 20; Лука 8:1; Рим 10:9, 10 пăхăр.)
© 2015 Watch Tower Bible and Tract Society of Pennsylvania